Эсир ыйтнипе

Çăмăллăхсем е укçа?

Федераллă çăмăллăхсемпе усă куракансен тата хаçат вулакансен ыйтăвĕсем çине РФ Пенси фончĕн районти уйрăмĕн уйăхсерен укçа тӳлесе тăрас енĕпе ĕçлекен тĕп специалисчĕ З.И. ИГНАТЬЕВА хуравлать:

– Камсене тивĕçет соцпакет?

– Федераллă çăмăллăхсемпе усă куракансен шутне вăрçă участникĕсемпе инваличĕсем, çар операцийĕсене хутшăннă ветерансем, чернобылецсем, вилнĕ вăрçă ветеранĕсен тăлăх арăмĕсемпе çул çитмен ачисем кĕреççĕ. 2005 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса вĕсен уйăхсерен укçа тӳлесе тăраççĕ тата вĕсен соцпакет илме право пур.

– Мĕн-мĕн кĕрет соцпакет шутне?

– Соцпакет медицина тата транспорт пайĕсенчен тăрать. Медицина пайĕн шутне тухтăр панă рецептпа эмелсем тӳлевсĕр илесси, медицина изделийĕсем, инвалид ачасене сиплевлĕ апатлантарасси, кунпа пĕрлех медицина кăтартăвĕсене кура санаторисемпе курортсенче тӳлевсĕр сиплесси кĕреççĕ. Транспорт пайĕн шутне вара хула çывăхĕнчи поездпа тата хуласем хушшинчи транспортпа сиплев вырăнне тата каялла тӳлевсĕр çӳрессине кĕртнĕ.

– Миçе тенкĕпе танлашать соцпакет?

– 2007 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса соцпакет уйăхне 513 тенкĕ шутланать. Вăл шутран медицина пайĕ 456 тенкĕ тата транспорт пайĕ 57 тенкĕ.

– Соцпакетпа усă куракан тепĕр çулне уннăн укçан илес шутласан?

– Çăмăллăхсемпе усă куракан çулленех хăйне килĕшекен варианта суйласа илме пултарать. Калăпăр, кăçал вăл соцпакетпа усă курнă, çитес çул вара уннăн укçа илсе тăма шутлĕ. Нимĕнле чару та çук.

– Заявлени çырмалли тапхăр пирки кăштах.

– Соцпакет вырăнне укçа илсе тăрас текенĕн октябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр заявлени çырса памалла. Калăпăр, çăмăллăхсемпе усă куракан 2008 çулта соцпакет вырăнне укçа илес тет пулсан, унăн 2007 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр заявлени çырса памалла.

– Encher вăл кун пек заявление унччен çулсенче çырса панă пулсан?

– Заявление кашни çул çĕнĕрен çырас пулать.

– Çынран Пенси фондне заявлени пыман пулсан?

– Заявлени килмесен çăмăллăхсемпе тивĕçтереççĕ, уннăн укçан тӳлемеççĕ. Çулталăк хушши.

– Çăмăллăхсемпе усă куракан пĕр тĕсне сыхласа хăварас, тепринчĕн укçан илес тет пулсан?

– Нимĕнле чару та çук. Заявленире ăна палăртмалла кăна.

– Заявленипе кашнийĕн хăйĕн пымалла-и Пенси фондне?

– Федераллă çăмăллăхсемпе усă куракан çыннăн соцпакетшăн пĕтĕмпех е унăн пĕр пайĕшĕн укçан илес тесе заявление Пенси фондне хăйĕн илсе пырса памалла. Паллах, почтăпа, тăванĕсем е паллана çынсем урлă та парса яма пултарать, анчах та кун пек чухне заявленире алă пуснине нотариус патĕнче çирĕплетни кирлĕ.

– Федераллă çăмăллăхсемпе усă куракан çын республика тулашне тухса кайнă чухне мĕнле пулмалла?

– Вăл соцпакет вырăнне укçан илсе тăмасть пулсан, унăн Пенси фондĕнче ытти регионта транспортпа тӳлевсĕр çӳреме тата эмелсем укçасăр илме справка илес пулать.

– Татăклă йышăну тăвайманнисене мĕн сĕннĕ пулăттăр?

– Çавна кăна. Вĕçĕмех чирлекенсен тата эмелпе усă куракансен соцпакетăн медицина пайĕшĕн укçа илсе тăрас тесе заявлени çыриччен лайăхрах шутласа пăхасчĕ.

Чрезвычайлă лару-тăру

Шăрăх кунсем пуçланчĕç кăна...

Чăваш Республики географи тĕлĕшĕнчен лăпкă вырăнта вырнаçнă пулин те, сисчĕвлентерекен ыйтусем пирĕн те çук мар. Вĕсенчен пĕри – пушар хăрушсăрлăхĕ. Çулталăк пуçланăранпа район территорийĕнче пулнă 14 пушарта кăçал 7 çын пурнăçĕ вăхăтсăр татăлчĕ. Вăл шутран пĕр ача. Экспертиза 7 çынран 6-шĕ инкек тӳснĕ вăхăтра ӳсĕр пулнине палăртнă. Мĕн патне пыратпăр капла?

Кăçалхи юлашки инкек майăн 18-мĕшĕнче Чуманкасси ялĕнче пулса иртрĕ. Каç пулттипе пилĕк хваттерлĕ çурт çунса кайни тата çулăм тыткăнĕнче 3 çын пурнăçĕ (пĕри – 3 çулхи ача) вăхăтсăр татăлни района çеç мар, республикăна та ура çине тăратрĕ.

Асăннă кун 20 сехет çурă тĕлĕнче Чапаев ячĕпе хисепленекен хуçалăх балансĕ çинче тăракан пĕр хутлă 5 хваттерлĕ çуртра пушар тухать. Кун çинчен пĕлтерни Муркашри 37-мĕш номерлĕ пушар чаçне 20 сехет те 45 минутра çитет. Пушара сӳнтерме "Оринино", "Свобода", Ильич яч. хис., Суворов яч. хис., "Ударник" хуçалăхсен ведомствăлла пушар хуралĕсене, Муркашри пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх бардавозне чĕнеççĕ. Пĕрремĕш пушар машини (ПЧ–37) çитнĕ çĕре (21 сехет те 5 минут) 5 хваттерлĕ çурт пĕтĕмпех çулăм тыткăнне лекнĕ. Пушарнăйсем çитсен 20 минутран çулăмăн сарăлас çулне пӳлеççĕ, 22 сехет те 50 минутра сӳнтереççĕ.

Мĕн тухрĕ-ха пушар хыççăн куç умне? Тĕрĕслев ирттерни пушар 2-мĕш хваттертен тухни палăрнă. Кунтах виçĕ çын вилине тупнă. Вĕсем: 70 çулхи кил хуçи М. Данилова, хăнана килнĕ 28 çулхи ывăлĕ А. Данилов тата кил хуçин виçĕ çулхи мăнукĕ Г. Захаров.

Майăн 18-мĕшĕнче амăшĕ патне ывăлĕ хăнана килсен вĕсем тĕл пулăва аншарлипе паллă тунă та çывăрма вырттнă. Тепĕр самантран кӳршĕсем Даниловсен хваттерĕнчен тĕтĕм тухнине сиссе хваттер алăкне уçса пăхаççĕ... Алăк уçсассăнах лăк! тĕтĕмпе тулса ларнă хваттерти çăра тĕтĕм çывăхри çынсене чыхлантарса ярать. Апла пулин те алăк уçакансем ун çывăхĕнчех Александр Данилов вырттнине асăрхаççĕ, çири тумтирĕ çунма пуçланă пулин те, вăл алăран пирус вĕçертменнине кураççĕ. Пулăшма çитнĕ кӳршĕсем инкек тӳсекене уçă сывлăша кăларса тăна кĕртме шывпа сапаççĕ, арçын уçăлса илет. "Мĕн пулса? Мĕн туса? Аппун ачипе аннӳ ăçта?" – ыйтусем нумай... Тепĕр самантран тăна кĕнĕ арçын амăшĕпе аппăшĕн ачине çăлма тесе çынсем умĕнчех çулăмпа çунма пуçланă хваттере кĕрсе каять... Кӳршĕре çĕнĕ пӳрт ĕçки уявлакансем, хваттертен çăра тĕтĕм тухнине курсан, унта пĕрремĕш çитнĕскерсем, ăна чĕрĕлле тек кураймаççĕ... Çивитти çине тухса хăвăрт сарăлнă çулăм вара никама та хăй ытамĕнчен вĕçертмест...

Тĕпчев ĕçĕсем ирттерни пушара çул параканĕ ӳсĕрле пирус туртнă чух асăрханулăха çухатни иккенне кăтартать. Пушар сăлтавне тĕрĕслениннчен çакă та паллă (ку пуриншĕн те урок пулмалла): пилĕк хваттерлĕ пӳртĕн йывăç пайĕсене çулăмран хӳтĕлекен шĕвекпе сĕрсе-сирпĕтсе хӳтĕлеменрен çулăма типĕ йывăç конструкцисемпе хăвăрт сарăлма çул уçăлнă. Пушар вăхăтĕнче çулăм çӳллелле кайнине пурте пĕлетпĕр. Çапла вара çуртăн çителĕклĕ сывлăшлă мачча çийĕ ку тĕслĕхре шăрпăк пекех пулса тăнă. Паян чылай çивиттисене асбест шиферпа витнĕрен кунта та вăл çак материалтанах пулнă. Вĕрире вара асбест шиферăн катăлса айккалла сирпĕнес енĕ пур. Çакă пушарта ун патне çывхарма хăрушлăх кăларса тăратать. Çавăнпа та малтанах алă айĕнчи хатĕрсемпе çулăма сӳнтерме хăтланнă çынсем шифер катăлса сирпĕнме пуçласан çурт патне тек витрепе шыв сапма çывăха пырайман. Кун пек чух алă айĕнчи пушар машини пĕлтерĕшлĕ пулмалла, анчах Чуманкассисен вăл пĕрремĕш кун мар юсавра. Çакă ведомствăлла пушар хуралĕсен машинăсене яланах юсавлă тытмалли пирки тепĕр хут çирĕплетсе калать.

Пушар сӳнтермелли ĕçсене шыв çителĕксĕрри чăрмав кӳни пирки. Инçетрех пулман пĕве патне пушар машинисене шыв илме пымалли ятарлă çирĕплетнĕ вырăн пулманран вĕсем шыв илесси те çак чрезвычайлă лару-тăрура йывăр ыйту пулса тăнă. Çакă ытти ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене те хăйсем патĕнче ял çывăхĕнчи плотина-пĕверен шыв илме пирсем тăвас ыйтăва мала кăларма ыйтать. Кунсăр пуçне паян кашни ял тăрăхĕнчи пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен хирĕсенчех 50-70 кубла мертлă цистернăсем пушă лараççĕ. Вĕсене ялсене вырнаçтарса унта шыв тытсан та инкек вăхăтĕнче ялсенче шыв çук ыйту самантлăха та пулсан татăлĕччĕ.

Обществăлла çуртсенче уйрăмах йывăç конструкцисене çулăмран хӳтĕлекен шĕвекпе сĕрсе-сирпĕтсе хӳтĕлесси пирки пушар хуралĕн ĕçченĕсем çулленех аса илтерсе тăраççĕ. Анчах сĕнӳсене вăхăтра хăлхана чикменнисен... Иртнĕ çулсенче çак ĕçе районти пур шкулсемпе çуллахи лагерьсенче те пурнăçланă пулсан, Чапаев ячĕпе хисепленекен хуçалăхăн балансĕ çинчи çак обществăлла çуртра ăна тума те хал çитмен, те экономика хăват паман? Пулса иртнĕ инкек кăçал ку ĕçе районти фельдшер-акушер пункчĕсенче лицензи иличчен тата ытти обществăлла çурт-йĕрсенче те кая юличчен тума ыйтать.

Асăннă пушар районшăн çеç мар, республикăшăн та пысăк инкек пулнине вырăна инкек çинчен пĕлтернĕ-пĕлтермен район ертӳçисем тата районти шалти ĕçсен пайĕпе прокуратура ĕçченĕсен оперативлă ушкăнĕ тухнипе пĕрлех Раççей Федерацийĕн Чрезвычайлă лару-тăру министерствин Чăваш Республикинчи Тĕп Управленийĕн патшалăх пушар надзор управленийĕн пуçлăхĕ А. Дергунов та çитни çирĕплетсе парать.

Пулса тухнă лару-тăру пирки Чуманкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Людмила Германовна Ковалева çапла каласа пачĕ:

– Пушар хăрушлăхĕ каламасăрах паллă. Çакна шута илсе кăçал кăна кашни ялтах ял старостисене тата вырăнти депутатсене хутшăнтарса пушар хăрушсăрлăх ыйтăвĕсемпе калаçу-вĕрентӳсем ирттерĕмĕр. Кунсăр пуçне эрех ĕçекенсен, пĕччен пурăнакансен кил-çурчĕсене уйрăммăн тĕрĕслерĕмĕр. Каланине шута хуманни мĕн патне çитернине халĕ яр уççăнах куратпăр. Чапаев ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕн ведомствăлла пушар хурал машини пирки вара çавна калайратăп: хамăр ял тăрăхĕн бюджетĕнчен кунти пушар хуралне тытса тăма иртнĕ çулхи декабрьте хуçалăха 11800 тенкĕ укçа куçарса патăмăр. Анчах вĕсем çав суммăпа пушар машинине юсаса çитереймерĕç... Çак пушар ялĕпех те кайма пултаратчĕ. Пĕлтерсен çийĕнчех çитнĕ Муркашри 37-мĕш номерлĕ пушар чаçĕн пушарнăйĕсем оперативлă ĕçленине пула çулăма айккалла сарăлма памарĕç.

А. БЕЛОВ.

Спорт

Спартакиадăра ăнăçусем сунатпăр

«Пĕрлĕхлĕ Раççей» («Единая Россия») партире тăракансемпе вĕсемпе пĕр шухăшлисене физкультурăпа спорта анлăрах явăçтарас, сывă пурнăç йĕркине сарас тĕллевпе регионти политканаш президиумĕн йышăнăвĕпе паян Канаш районĕнчи Шăхасанти физкультурăпа спорт комплексĕнче Пĕтĕм Раççейри «Пĕрлĕхлĕ Раççей» политика партийĕн Чăваш регион уйрăмĕн спартакиади иртет. Унта хутшăнакансем пляж волейболĕ енĕпе вăй виçеççĕ, шывра ишсе ăмăртаççĕ, мини-футболла выляççĕ тата 100 метр чупаççĕ. Çак спартакиадăна районтан хутшăнакан спортсменсене ăнăçусем сунатпăр.

Футболистсем ăмăртаççĕ

Июнь уйăхĕнче футболла выляса район кубокне çĕнсе илесишĕн ял хуçалăх предприятийĕсен, организацисемпе учрежденисен командисем хушшинче ăмăртусем иртеççĕ. Жеребьевка майăн 31-мĕшĕнче районти вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн 334-мĕш пӳлĕмĕнче 9 сехетре пуçланать. 1-мĕш вăйă июнĕн 1-мĕшĕнче иртет, 19 сехетре пуçланать.

Акатуй уявне халалласа

Июнĕн 2-мĕшĕнче Акатуй уявне халалласа Лантăш вăрманĕн уçланкинче волейболла выляссипе ял хуçалăх предприятийĕсен, организацисемпе учрежденисен командисем хушшинче отборочнăй ăмăртусем иртеççĕ. 11 сехетре пуçланаççĕ. Подгруппăсенче çĕнтернисем июнĕн 10-мĕшĕнче 1-мĕш вырăншăн финалта вăй виçеççĕ.

Пĕлтерӳсем. Объявления

БЫТОВАЯ ТЕХНИКА
по оптовым ценам на заказ: телевизоры, холодильники, СВЧ-печи, стиральные машины, электроинструменты, пылесосы, мотоблоки и многое другое.
Тел.: 8-906-385-29-30. 8-8.

СПУТНИКОВОЕ ТЕЛЕВИДЕНИЕ
любой сложности, от 3000 рублей, с установкой. Триколор – 5000 руб.
Тел.: 8-906-385-29-30. 8-8.

На постоянную работу ООО «МОРГАУШРАЙБЫТ» приглашает: парикмахеров, швей, требование (опыт работы); учениц швейного производства, мастера-наладчика швейных машин (образование и опыт работы не требуется).
Контактный телефон: 2-18-40.
Возможность профессионального роста, прогрессивная и своевременная оплата труда, по желанию работников в счет зарплаты выдача продукции сельскохозяйственного производства: зерно, солома по ценам производителя, также предоставляется полный соцпакет. 2-2.

ЗАО МСО «Моргаушская» продает раствор, бетон, керамзитобетонные блоки.
Обращаться по адресу: Моргаушский район, д. Юнгапоси, ул. Ягодная, д. 21. Тел.: 2-21-29, 32-2-23.

Тăватă хут пăруланă хура тĕслĕ шурă уралла ĕне сутатпăр. Февралĕн 15-мĕшĕнче пăруламалла.
Адресĕ: Москакасси ялĕ, Озерная урам, 8-мĕш çурт. Алексеева Вера Спиридоновна.

Продаю дом деревянный на вывоз.
Телефон: 8-905-027-23-42.

Продаем цемент, шифер семиволновый, восьмиволновый, плоский, рубероид, лаки, краски, обои. Обращаться: с. Моргауши, магазин «Рука мастера».
Тел.: 8-903-346-40-58. 2-5.

Куплю однокомнатную квартиру.
Телефон: 8-906-133-90-26.

ТРЕБУЮТСЯ
водители на КАМАЗ
Тел.: (8352)21-35-89
1-2.

Чуманкасси (Хупахушкĕн) ялĕнче июлĕн 23-мĕшĕнче тăваттăмĕш хут пăруламалли ĕне сутаççĕ. Ирхине 5 сехетрен 6 сехетчен, каçхине 20 сехетрен 21 сехетчен пымалла.
Адресĕ: Чуманкасси (Хупахушкĕн) ялĕ, Урожайная урамĕ, Зараниксем.

Продается двухкомнатная квартира в с. Б. Сундырь.
Тел.: 8-906-136-73-79. Владислав. 1-4.

12 мая потерялся серый нестриженый пудель 6-ти лет. Помогите найти. Тел.: 2-17-83.

6 çулхи хĕрлĕ ĕне сутатăп. Тел.: 8-903-066-55-96.

Моргаушское ОСБ №7034 Сбербанка России сообщает, что снижены процентные ставки по вновь выдаваемым кредитам физическим лицам на приобретение, строительство, реконструкцию и ремонт объектов недвижимости.

Процентные ставки по действующим кредитным договорам оставлены без изменения.

Если проценты по кредитам на недвижимость до 01.05.07г. колебались от 13 до 15 % годовых, то с 02.05.2007 г. снижены до 12 % и 12,5 % (в зависимости от сроков кредитования).

По ипотечным кредитам до 01.05.2007 г. выдавались кредиты сроком до 5 лет по 13 % сроком, до 10 лет – по 14 %, сроком до 20 лет – по 15 % годовых. С 02.05.2007 г. установлены следующие процентные ставки: сроком до 10 лет – 12 %, сроком до 20 лет – 12,25 %, сроком до 30 лет – 12,5% годовых. После регистрации ипотеки снижаются процентные ставки соответственно до 11,5 % сроком до 10 лет, до 11,75 % сроком до 20 лет, до 12,0 % годовых сроком до 30 лет (до 01.05.07 г. были ставки 12,5 % сроком до 5 лет, 13 % сроком до 10 лет, 13,5 % сроком до 20 лет). Размер процентной ставки по кредиту зависит от суммы первоначального взноса на оплату объекта недвижимости.

До 12 % годовых снижены на кредиты для оплаты обучения в образовательных учреждениях "образовательный кредит" (до мая 2007 г. было 17 процентов).

На покупку автомобилей сроком до 5 лет установлены следующие процентные ставки: для нового автомобиля – 11 %, поддержанного – 11,5 % годовых.

Желающим приобрести квартиру в г. Чебоксары сообщаем также о том, что при кредитовании объектов долевого строительства по позициям 3 в микрорайоне "Волжский-3" (застройщик ООО "Отделфинстрой") и по группам жилых домов по позициям 4В по ул. Университетской (застройщик ОАО "Инвестиционная строительная компания "Честр-Групп") от заемщиков не требуются исходно-разрешительная документация, необходимо предоставить только договор на долевое участие.

Подробную информацию по возникающим вопросам обращаться по телефону 2-23-46 или по адресу: с. Моргауши, ул. Ленина д.34. Сектор кредитования Моргаушского отделения работает в рабочие дни без перерыва на обед, выходной день – воскресенье.

РУКОВОДСТВО БАНКА.

ГУП ЧР "Моргаушский издательский дом"
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики "Моргаушский издательский дом".
Директор-главный редактор
А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: **morpress@cbx.ru**

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу. Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 1,0 п. листа. Тираж 3511
Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 29.05.2007 г.
Заказ
Дежурный по номеру ШАПОШНИКОВ В.Л.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП "Моргаушский издательский дом", отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.